28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 СЕНТЯБРЬ 15 ШАМАТКУН 179(6930) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Ача çурчĕсемшĕн тимлĕнрех тăрăшмалла

Çамрăк ăрăва пусмăрлăхпа чуралăх курмасăр, ирĕклĕн вĕренсе çитĕнме май туса пани—Октябрьти революципе Совет влаçĕн пысăк çитĕнĕвĕсенчен пĕрри пулса тăрать. Ленин—Сталин аслă партийĕ çамрăксене коммунистла вĕрентсе çитĕнтерес ĕç çине яланах тимлĕн çаварăнса пăхнă, çаварăнса пăхаççĕ те. Совет ачисемпе çамрăкĕсем валли пирĕн государство яслисемпе садсем, шкулсемпе университетсем çĕршерĕн те пиншерĕн уçса панă. Тăлăха юлнă ачасемшĕн совет правительстви уйрăмах тимлĕн тăрăшать. Патша саманинче тăлăх чăваш ачи: «тăлăх турат пуличчен хăрăк турат пулас мĕн, çилпе хуçăлса ӳкес мĕн, шывпа юхса каяс мĕн» тесе, хурлăхлăн юрланă пулсан, халĕ ĕнтĕ çав юрă манăçа юлнă. Пирĕн аслă Тăван çĕршыв кашни ачана, юратнă тăван ашшĕ пек, пăхса çитĕнтерет.

Отечественнăй вăрçăн чи йывăр çулĕсенче те партипе правительство çамрăк ăру çинчен пĕр самантлăха та манман. Вăрçа пула ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă пиншер ачана хӳтлĕх панă, вĕсем валли государство вăййĕпе те, халăх вăййĕпе те çĕнĕрен ача çурчĕсем, интернатсем уçнă. Чăваш республикине илсессĕн, кунта бюджетри расход пайĕнче социаллă-культурăллă мероприятисене пурнăçа кĕртесси яланах чи пысăк вырăн йышăнса тăнă. Çамрăк ăрăва пăхса, вĕрентсе çитĕнтерес ĕç валли правительство çулсерен нумай миллионшар тенкĕ укçа парать. Çамрăк ăрушăн совет влаçĕ нимĕн те хĕрхенсе тăмасть, мĕншĕн тесен «çамрăксем—пирĕн пуласлăх, пирĕн шанчăк... Çамрăксен пире, старикесене, улăштарса пирĕн вырăна тăмалла. Вĕсем пирĕн ялава татăклă çĕнтерӳ патне илсе çитерме тивĕçлĕ» (Сталин).

Пирĕн Чăваш республикинче тăлăх ачасем валли 12 ача çурчĕ уçса панă. Çав учрежденисен аллинче—лайăх çуртйĕрсем, государство çĕрĕпе улăх-çаранĕсем, подсобнăй хуçалăхсем. Ачасене çав çуртсенче тăван килĕсенчи пек пурăнма пирĕн правительство çителĕклĕ майсем панă. Çав майсемпе ача çурчĕсен руководителĕсем, çутĕç органĕсем тĕрĕс усă курма пĕлни, вĕсене партипе совет тата комсомол организацийĕсем, ялтипе хулари общественность пулăшса пыни кăна кирлĕ.

Анчах ку тĕлĕшпе вара ĕçсем йĕркеллĕ тесе калама çук. Сăмахран, Етĕрне районĕнчи организацисем, пуринчен малтан кунти райсовет исполкомĕ, хăйсен районĕнчи ача çурчĕ çинчен пĕтĕмпех манса кайнă. РСФСР Совнаркомĕ «Ача çурчĕсен ĕçне лайăхлатасси çинчен» 1944 çулхи июлĕн 6-мĕшĕнче йышăннă постановление райсовет исполкомĕпе районри çутĕç пайĕ пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Ача çуртне хĕле хатĕрлесе çитермен, çуртйĕрсене юсаман. Хĕл каçма ача çуртне пурĕ 1200 кубометр вутă кирлĕ пулать, халлĕхе пĕр вутсыппи те çук-ха. Вутта ача çурчĕн лашисемпе пĕрер кун хутмалăх кăна турттарса тăраççĕ. Сĕтел-пукансем, хуçалăх инвентарĕ, кашăк-тирĕксем çителĕксĕр, пуррисем ялăхса кайнă, çĕнĕрен тумаççĕ, туянмаççĕ. Общежитисенче кроватьсемпе вырăнсем çителĕксĕр пирки ачасем ушкăнĕ-ушкăнĕпе выртса-тăраççĕ. Санитарипе гигиена ĕçĕ япăх, медицина тĕлĕшпе пăхса тăрассине йĕркелемен. Чăваш республикин Наркомторгĕ апат-çимĕç фончĕсене вăхăтра парса тăман пирки тата Чăвашсоюз çав фондсене кирлĕ пек тивĕçтерсе пыман пирки, ачасене начар апатлантараççĕ.

Етĕрнери ача çуртĕнче вĕренӳпе воспитани ĕçне те начар йĕркеленĕ. Воспитательсем çитмеççĕ, пуррисенчен те (21 çынран) 4 çын кăна вăтам шкултан вĕренсе тухнă, ыттисен пĕлĕвĕсем çителĕксĕр. Çавăн пекех учебниксемпе вĕренӳ хатĕрĕсем те питĕ сахал. Ачасем хăйсене тыткаламалли правилăсене пăхăнмаççĕ. Кунта пионер ĕçне туса пымаççĕ. Ачасене ĕçе вĕрентессине япăх организациленĕ. Оборудованипе чĕртавар çук пирки, вĕренӳпе производство мастерскойĕсем хупă тăраççĕ. Çак ача çурчĕ «аякра» вырнаçса тăнине пула, кунта Наркомпрос çитсе курмасть.

Партин Етĕрне райкомĕ ача çурчĕн ĕçне куллен тĕрĕслесе, сăнаса тăрас вырăнне, ун çине пачах та çаварăнса пăхман. Ытларах та, сăмахран, комсомол уйăрса лартнă старши пионервожатăя парти райкомĕ, кунтан илсе, урăх ĕçе янă.

Етĕрнери ача çурчĕн лайăх, кăтартуллă ĕçлеме пур майсем те çителĕклĕ. Пĕтĕм ĕçе районри организацисем ача çуртне тăлăха тăратса хăварни кăна чăрмантарать.

Çак кунсенче ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ. Етĕрнери ача çурчĕн ĕçне пăхса тухса, ача çурчĕ çине çавăн пек япăх пăхнăшăн Етĕрне райсовет исполкомĕн председательне Хромов юлташа ятларĕ. Партин Етĕрне райкомĕн секретарьне Сомов юлташа тата Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарне Макаров юлташа ача çурчĕшĕн ытларах тăрăшма кирлине кăтартса пачĕ.

Сӳлерехре палăртнă çитменлĕхсене Йĕпреçри, Кĕрпӳри, Явлейри (Улатăр районĕ), Байшевăри (Шăмăршă районĕ) ача çурчĕсенче те курма пулать. Асăннă районсенчи организацисем—парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем, комсомол райкомĕсемпе райçутĕç пайĕсем ача çурчĕсенчен аякра тăраççĕ. Сăмахран, Йĕпреç райисполкомĕ ача çуртне подсобнăй хуçалăхри тырпула пухса кĕртме пулăшас вырăнне, унти пур-çук лашасене те тырă турттарма илсе кайнă. Ача çуртĕнче ачасене уйăх ытла ĕнтĕ мунча хутса кĕртмеççĕ. Мĕнле тасалăх çинчен калаçма пулать-ха çакăн хыççăн? Районри çутĕç пайĕ ача çуртне—воспитательсем, комсомол райкомĕ старши пионервожатăй тупса памаççĕ. Ача çурчĕн хĕлле хутма вутă çук.

Пирĕн ача çурчĕсемшĕн тимлĕнрех тăрăшакан районсем пур. Тĕслĕхрен, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Октябрьски тата Комсомольски районсене кăтартса пама пулать. Кунта районри организацисем ача çурчĕсене ĕçлĕ пулăшу парса пыраççĕ.

Районри организацисем тăрăшнипе пула, Сĕнтĕрвăррипчи ача çуртне хĕле хатĕрлесе çитернĕ. Ача çурчĕн пысăк подсобнăй хуçалăх пур, тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте ачасем уйрăм звеносемпе ĕçлеççĕ, звеносене воспитательсем ертсе пыраççĕ. Ача çурчĕ çумĕнче столярнăй тата слесарнăй мастерскойсем пур, унта ачасем алăсталăхне вĕренеççĕ. Районри промысла артелĕсем ача çурчĕ валли сĕтел-пукансем туса параççĕ. Çутĕçпайĕпе райкомол ача çуртĕнче воспитательсем пулса ĕçлеме районри чи лайăх учительсене уйăрса панă. Парти райкомĕ ача çурчĕн ĕçне куллен сăнаса, пулăшса пырать.

Пур çĕрте те ĕçе çакăн пек йĕркелеме, ача çурчĕсене пулăшнă çĕре районри общественноçа мобилизациленме пулать. Ачасемшĕн тăрăшни, вĕсен пурнăçĕ пирки ытларах шухăшлани кирлĕ.

Ача çурчĕсен ĕçне лайăх йĕркелесе ярас тесен, пуринчен малтан, кашни ача çуртĕнче районри организацисемпе общественность представителĕсенчен попечительсен советне тумалла. Наркомпроспа ВЛКСМ Обкомĕн чи лайăх учительсенчен, ачасемпе ĕçлеме юратакан активлă комсомолецсенчен воспитательсем, старши пионервожатăйсем уйăрса парас пулать. Ача çурчĕсенчи комсомолпа пионер организацийĕсене çирĕплетмелле. Вĕрентӳпе воспитани ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла.

Ача çурчĕсене хĕле хатĕрлесе çитерес ĕçре райсовет исполкомĕсен, обществăллă организацисен, колхозсен тимлĕн пулăшмалла. Наркомторгпа Чăвашсоюзăн ача çурчĕсене апат-çимĕçсене вăхăтра парса тăрас пулать. Ачасене тумлантарас тĕлĕшпе те пирĕн çителĕклĕ майсем пур. Промышленность предприятийĕсем ача çурчĕсенчи ачасене ĕçе вĕрентнĕ çĕрте шеф йĕркипе пысăк пулăшу пама пултараççĕ.

Ача çурчĕсем вырнаçса тăракан районсенчи парти райкомĕсем çав учрежденисен ĕçне кăтартуллă йĕркелессишĕн тăрăшмалла, вĕсене ĕçре куллен конкретлăн пулăшса пымалла, çак ĕçе районри общественноçа, пуринчен ытларах комсомолецсене, çавăн пекех рабочисемпе колхозниксене те анлăн явăçтармалла.

Пирĕн партипе правительство çамрăк ăрăва вĕрентсе çитĕнтерес ĕç валли нимĕн те хĕрхенсе тăмасть пулсассăн, çак ĕçе вырăнти партипе совет тата комсомолпа çутĕç органĕсен аллине шанса панă пулсассăн, вĕсен çав шанчăка тӳрре кăлармалла, ача çурчĕсенчи çамрăксемшĕн тимлĕн тăрăшмалла.

Совет Союзĕнчи государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсен, колхозсен, обществăллă организацисен тата граждансен пурлăхне фашистла нимĕç захватчикĕсем кӳнĕ сиен çинчен

(Фашистла нимĕç захватчикĕсен тискер ĕçĕсене тĕпчесе палăртма тунă Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси пĕлтернинчен)

ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн 1942 çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх, Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси Совет Союзĕнчи граждансен, колхозсен, обществăллă организацисен тата государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсен пурлăхне фашистла нимĕç захватчикĕсем мĕн чухлĕ сиен кӳнине шута илнĕ, вара çакна палăртнă: Совет Союзĕн оккупациленĕ территорийĕнче тăшман пирĕн халăх хуçалăхне тата халăха калама çук пысăк сиен кӳнĕ.

Нимĕç çарĕсем тата оккупаци влаçĕсем Гитлерăн преступникла правительстви тата верховнăй çар командованийĕ хушнине пурнăçа кĕртсе пынă, хăйсем тытса илнĕ совет хулисемпе ялĕсене, промышленность предприятийĕсене тата колхозсене ишĕлтернĕ, çаратнă, искусство памятникĕсене çĕмĕрнĕ, оборудованипе, чĕртаварпа материалсен тата хатĕр продукцин запасĕсене, художествăпа истори енчен хаклă япаласене пĕтерсе пынă, тустарнă тата Германие илсе кайнă, хуларипе ялти халăха тăтăшах çаратнă.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем 1.710 хулана тата 70.000 яла ытла пĕтĕмпех е пăртак ишĕлтернĕ тата çунтарса янă, 6 миллион çурта ытла çунтарса янă тата ишĕлтернĕ, 25 миллион çынна яхăн çуртйĕрсĕр тăратса хăварнă. Вĕсем 31.850 промышленность предприятине ишĕлтернĕ, 239.000 электромотора, металл касакан 175.000 станока пĕтерсе тăкнă е Германие илсе кайнă. Вĕсем тата 65.000 километр тăршшĕ чугун çула, 4.100 чугун çул станцине, почтăпа телеграфăн 36.000 учрежденине, станцине тата предприятине ишĕлтернĕ. 40.000 больницăна тата сыватмалли учрежденисене, 84.000 шкула, техникума, аслă шкула тата наукăпа тĕпчев институтне, халăх усă куракан 43.000 библиотекăна пĕтерсе тăкнă е аркатнă.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем 98.000 колхоза, 1.876 совхоза тата 2.890 машинно-тракторнăй станцие аркатнă тата çаратнă; 7 миллион лашана, 17 миллион пуç мăйракаллă шултăра выльăха, 20 миллион сыснана, 27 миллион сурăхпа качакана, 110 миллион пуç чăх-чĕпе пусса çинĕ, тытса илнĕ е Германие хăваласа кайнă.

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси, 7 миллион çын ытла хутшăнса çырнă актсем тăрăх, фашистла нимĕç захватчикĕсем Совет Союзĕн халăх хуçалăхне тата ялсемпе хуласенчи уйрăм çынсене, 1941 çулхи государство хакĕсемпе шутласан, 679 миллиард тенкĕлĕх сиен кӳнине палăртнă.

Çак цифрăсем фашистла нимĕç захватчикĕсем Совет Союзне кӳнĕ пĕтĕм сиене кăтартса параймаççĕ-ха. Вĕсем уйрăм çынсен, колхозсен, обществăллă организацисен тата государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсен пурлăхне тӳрремĕнех пĕтерсе тăкнипе мĕн чухлĕ сиен тунине çеç кăтартаççĕ. Ку шутра çакăн пек сиенсене кĕртмен: государство предприятийĕсем, колхозсем тата уйрăм çынсем ĕçлеме пăрахнă пирки е сахалтарах ĕçленĕ пирки халăх тупăшĕ чакнине, Германин оккупаци çарĕсем тытса илнĕ апат-çимĕçпе снабженин пĕтĕм хакне, Совет Союзĕн вăрçă расхочĕсене, çавăн пекех тата тăшман 1941—1945 çулсенче пире хирĕç вăрçнине пула пирĕн çĕршывăн хуçалăхĕ ӳссе пырас хăвартлăх чакнă пирки пулнă сиене кĕртмен.

Тăшман кӳнĕ сиен шутне фашистла нимĕç захватчикĕсем вăхăтлăха оккупациленĕ совет территорийĕнче темиçе миллион совет çыннине пĕтернине—пирĕн халăхăн çав калама çук пысăк çухатăвне кĕртмен.

ПРОМЫШЛЕННОÇА, ТРАНСПОРТА ТАТА ÇЫХĂНАВА ИШĔЛТЕРНИ

Совет Союзне тапăнса аркатса тăкмалли, çавăн пекех тата унăн халăх хуçалăхне йĕркерен çаратса тухмалли тĕплĕ плана Гитлер правительстви тата Германин генеральнăй штабĕ вăрçă пуçланиччченех хатĕрлесе хунă.

Совет Союзĕн промышленноçне çаратма тунă преступникла плана пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме тăрăшса, Гитлер правительствипе çар командованийĕ нимĕç çарĕсем каялла чакнă чухне шахтăсене, нефть тухакан шăтăксене, заводсене, машинăсене тата промышленноçăн пĕтĕм оборудованине пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пынă.

Донбасра тата Мускав патĕнчи çĕркăмрăк бассейнĕнче фашистла нимĕç захватчикĕсем 1.135 шахтăна ишĕлтернĕ, çав шахтăсенче вăрçăччен çулталăкра 100 миллион тонна ытла çĕркăмрăкĕ кăларса тăнă. Вĕсем, рудникри 2.400 электровозпа мотовоза, шăтармалли 2.700 машинăна, çĕркăмрăк катмалли 15.000 мăлатука, 5.000 насуса, 9.000 компрессорпа вентилятора, 160.000 вагонеткăна çаратса тухнă тата Германие илсе кайнă; çĕркăмрăк шахтисене энерги парса тăнă электричество станцийĕсене ишĕлтерсе тата çаратса пĕтернĕ.

Совет Союзĕн нефть тухакан районĕсене, уйрăмах та Кавказри нефть тухакан районсене, тытса илес ĕçе фашистла Германи калама çук пысăк вырăна хунă. Анчах та фашистла нимĕç захватчикĕсем, хăйсем тытса илнĕ нефть районĕсенче çирĕпленсе лараймасан, çав районсенчен тухса каймалла пулсан, кашни хутĕнчех нефть тухакан шăтăксене, оборудовани, мастерскойсене, складсене тата ыттисене те ишĕлтернĕ, пĕтерсе тăкнă. Грозный патĕнчи нефть промыслисенче тата Краснодар крайĕнче нимĕçсем, сывлăшран бомбăсем пăрахса е ытти майпа, нефть тухакан 3.000 шăтăка ытла пĕтерсе тăкнă, çав шăтăксенчен çулталăкра 5 миллион тоннăпа яхăн нефть туса тăнă пулнă. Вĕсем Грозный хулинче çулталăкра 660.000 тонна нефть продукчĕсем паракан атмосфера-вакуум установкине тата çулталăкра 227.000 тонна нефтьрен урăх япаласем туса кăларакан крекинг-установкăна сирпĕнтерсе янă, Краснодарти нефть заводне ишĕлтернĕ, 2 миллион кубометр калăпĕш резервуарсене, металран тунăскерсене, пĕтерсе тăкнă тата ытти те.

Оккупаци вăхăтĕнче, уйрăмах та хăйсем каялла чакнă чухне, нимĕçсем Днепр çинчи, Донбасри, Ленинградри, Харьковри, Краснодар крайĕнчи, Киеври, Воронежри, Крымри, Белорусси ССР-ĕнчи тата Кольск çурутравĕнчи энерги паракан хăватлă системăсене ишĕлтернĕ, электричество станцийĕсен чи хаклă оборудованийĕсене Германие илсе кайнă. Вĕсем чи пысăк 61 электростанцие тата пĕчĕкрех нумай станцисене, пурте пĕрле 5 миллион киловата яхăн энерги парса тăнăскерсене, сирпĕнтерсе янă, çунтарса янă е ишĕлтернĕ, электричество энергийĕ каякан пысăк вольтлă тĕп линисене 10.000 километр тăршшĕне яхăн юрăхсăра кăларнă, электричество станцийĕсемпе подстанцийĕсен 12.000 çуртне ытла пĕтерсе тăкнă, Германие 14.000 пăс хуранĕ, 1.400 турбина, 11.300 электрогенератор илсе кайнă.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем хура металлургин 37 заводне пĕтĕмпех е пăртак ишĕлтернĕ. Çав заводсенче çуллен 11 миллион тонна чугун, 10 миллион тонна хурçă, 8 миллион тонна прокат туса панă пулнă. Нимĕçсем 62 домнăна, 213, мартен кăмакине, 248 прокат станне, 4.740 кокс кăмакине тата ытти нумай япалана пĕтерсе тăкнă е ишĕлтернĕ, тĕслĕ металлургин 12 чи пысăк предприятине, çав шутра Днепр çинчи заводсене—алюминий, магний тата электрод завочĕсене—ишĕлтернĕ е юрăхсăра кăларнă.

Нимĕçсем ялхуçалăх валли хими продукчĕсем тата удобрени хатĕрлекен 66 азот завочĕпе хими заводне ишĕлтернĕ. Каучук тăвакан тата резинăпа асбестран тĕрлĕ япаласем тăвакан комбинатсене те ишĕлтернĕ.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем машинăсем тăвакан промышленноçа питĕ пысăк сиен кӳнĕ. Вĕсем пысăк машинăсем тăвакан 749 завода (Краматорскри, Ворошиловградри заводсене тата ыттисене те) ишĕлтернĕ. Тракторсем, автомобильсем, чугун çул вагонĕсем, мотоциклсем тата велосипедсем тăвакан 21 завода пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă, 27 завода сиенленĕ. Станоксем тăвакан 64 завода ишĕлтернĕ, ялхуçалăх машинисем, химире кирлĕ машинăсем, йывăç каскалакан машинăсем тата хут тăвакан машинăсем туса тăнă 169 завода пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă, электротехника промышленноçĕн электрогенераторсем, электромоторсем, трансформаторсем, электровозсем тата ытти тĕрлĕ оборудовани тăвакан 41 заводне ишĕлтернĕ.

Нимĕç фирмисем машинăсем тăвакан промышленноçăн завочĕсенчен Германие çакăн чухлĕ япала илсе кайнă: 47.000 комплект çĕклемелли оборудовани, механически вăйпа ĕçлекен 34.000 мăлатук т. ыт. те.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем вăрман хатĕрлекен нумай предприятие ишĕлтернĕ, çав предприятисем вăрçăччен çулталăкра 64 миллион кубометр йывăç хатĕрлесе панă; хăма çуракан тата йывăç каскалакан 260 предприятие ишĕлтернĕ. çав предприятисем çулталăкра 12 миллион кубометр тĕрлĕ хăма парса тăнă; çулталăкра 380.000 кубометр фанера туса тăнă 28 фанера заводне ишĕлтернĕ. Вĕсем тата çулталăкра 4 миллион ешĕке яхăн спичка туса тăнă 14 спичка фабрикине тата çулталăкра 300.000 тонна хут туса тăнă 77 хут предприятине пĕтерсе тăкнă.

Пир-авăр промышленноçĕпе çăмăл промышленноçра оккупантсем 120 пир-авăр фабрикине, 75 трикотаж фабрикине, 69 йĕтĕн фабрикине, 125 пуса-вĕрен фабрикине, 36 çăм фабрикине, 160 тир-сăран тата атă-пушмак фабрикине, 100 кĕленче заводне ытла тата ыттисене те нумай ишĕлтернĕ. Çапла ишĕлтернине пула, пир-авăр промышленноçĕнче арлакан 33 миллион йĕке тата пир тĕртекен 45.000 станок ытла пĕтнĕ.

Апат-çимĕçпе аш-какай промышленноçĕнче 204 сахăр заводне, 649 эрех заводне, 47 консерва заводне, 29 çу заводне, 43 табак фабрикипе ферментаци заводне, 157 пекарньăна, ашпа колбаса, сырпа сĕт тата çу предприятийĕсене—мĕн пурĕ 4.490 предприятие йăлтах ишĕлтернĕ.

Чугун çула пăсмалли машинăсемпе ĕçлесе, оккупантсем 26 тĕп чугун çула пĕтĕмпех юрăхсăра кăларнă, 8 тĕп чугун çула сиенленĕ, 65.000 километр тăршшĕ çула тата 800.000 километр тăршшĕ сыхăну линийĕпе автоблокировкăна ишĕлтернĕ. Вĕсем пĕтĕмпе 300 километр тăршшĕ пулакан 13.000 чугун çул кĕперне, 4.100 станцие, 1.200 насус станцине, шыв таптаракан 1.600 башньăна, 3.200 шыв колонкине сирпĕнтерсе янă. Вĕсем 317 паровоз депоне, паровозсемпе вагонсем юсакан тата чугун çул валли машинăсем тăвакан 129 завода пĕтерсе тăкнă.

Вĕсем 15.800 паровозпа мотовоза тата 428.000 вагона çĕмĕрнĕ, сиенленĕ, Германие илсе кайнă.

Тăшман тинĕс тăрăх пассажирсем, грузсем турттарса çӳрекен суднăсене тата ятарласа тунă суднăсене мĕн пурĕ 1.400 суднăна ытла путарнă е сиенленĕ, юхан шывсем тăрăх пассажирсем, грузсем илсе çӳрекен тата баржăсем турткан 4.280 парохода, хăй тĕллĕн çӳрекен 4.029 суднăна путарнă е тытса илнĕ, 479 портпа пристань хуçалăхне, Шурă тинĕспе Балтика хушшинчи каналăн тата Мускавпа Атăл хушшинчи каналăн сооруженийĕсене ишĕлтернĕ. 89 верфьпе механически завода ишĕлтернĕ. Техника енчен чи лайăх тинĕс порчĕсем—Севастопольри, Мариупольри, Керчьри, Новороссийскри, Одессăри, Николаеври, Ленинградри, Мурманскри, Лепайри, Таллинри тата ытти тинĕс порчĕсене хытă сиенленĕ.

Хĕрлĕ Çар хĕссе пынипе каялла чакнă чухне нимĕç çарĕсем 91.000 километр тăршшĕ шоссе çулне тата пĕрле 930 километр тăршшĕ пулакан 90.000 кĕпере пăсса, ишĕлтерсе хăварнă.

КОЛХОЗСЕНЕ, СОВХОЗСЕНЕ ТАТА МТС-сене ИШĔЛТЕРНИ

Фашистла нимĕç захватчикĕсем, малтанах хатĕрлесе хунă план тăрăх ĕçлесе, Совет Союзĕн оккупациленĕ территорийĕнче колхозсене, совхозсене тата машинно-тракторнăй станцисене пĕтерсе хурас политикăна пурнăçа кĕртсе пынă. Гитлерăн çĕреç министрĕ Дарре намăса пĕлмесĕр çапла каланă: Совет Союзĕ чурасен çĕршывĕ пулса тăмалла, тенĕ.

Совет Союзĕн хăйсем йышăннă территорийĕнче захватчиксем Совет государстви колхозсене ĕмĕрлĕхе укçасăрах панă çĕре тата совхозсен çĕрĕсене тыта-тыта илнĕ, вĕсене нимĕç генералĕсемпе офицерĕсене, помещикĕсемпе кулакĕсене салатса панă. Колхозсем вырăнне нимĕçсем «общинă хуçалăхĕ» ятлă хуçалăхсем туса лартма пуçланă, çав хуçалăхсем хресченсене çаратма лайăх май параканскерсем пулнă. «Община хуçалăхĕсенче» крепостла йĕркепе ĕçлеттернĕ, колхозниксене нимĕç улпучĕсем валли пĕр укçасăр ĕçлеттернĕ. Ĕçлеме килĕшмен е ĕçе тухман кашни çынна нимĕçсем Германи государствине хирĕç преступлени тунă çын тесе пĕлтернĕ, вара ăна хĕненĕ, тĕрмене хупнă е персе вĕлернĕ.

Колхоз хресченĕсем çак фашистла «çĕр реформине» хирĕç пынă. Вĕсене тавăрас тесе, нимĕç захватчикĕсем вара ялĕ-ялĕпе вут тĕртсе çунтарса янă, хирти тырра пĕтерсе тăкнă, халăха час-часах пере-пере вĕлернĕ, пĕр айăпсăр совет çыннисене пĕтерсе пынă.

Çапла, Псков облаçĕнче нимĕç салтакĕсем Заможье, Красуха, Чухонские Заходцы, Ланева Гора, Голованово ялĕсенчи çынсене пĕрле пухнă та вĕсене хупнă çуртсене вут тĕртсе янă. Çунакан çуртсенчен тухма хăтланакан çынсене пурне те автоматпа персе вĕлернĕ. Çапла 350 çын пĕтнĕ, вĕсем хушшинче хĕрарăмсемпе ачасем те, старисем те пулнă. Çавăн пек майпа Псков облаçĕнче 500 яла ытла пĕтерсе тăкнă.

Ялсене вут тĕртсе çунтарса, нимĕç фашисчĕсем вĕсенче пурăнакан çынсене пурне те çаратнă. Хирĕç тăракан çынсене тискеррĕн вĕлернĕ. Каменец-Подольск облаçĕнче нимĕç захватчикĕсем 563 яла çунтарса янă. 1.600 колхозра вĕсем çав колхозсен 16.000 çуртне ытла аркатса тăкнă; 176.000 ĕнепе вăкăра, 235.000 сыснана, 158.000 сурăхпа качакана, 687.000 пуç чăх-чĕпе, 198.000 лашана пуснă е Германие хăваласа кайнă. Колхозсенчен 142.000 тонна тĕштырă тата çăнăх туртса илнĕ. Курск облаçĕнче нимĕçсем 5.220 колхоза аркатса тăкнă; вĕсенче 80.000 çурта çунтарса янă е ишĕлтернĕ; 280.000 ĕнепе вăкăр, 320.000 лаша, 250.000 сысна, 420.000 сурăхпа качака тытса илнĕ, 1.300 пин пуç чăх-чĕп пуснă.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем Совет Союзĕн оккупациленĕ территорийĕнче пур çĕрте те колхозсене çавăн пек аркатнă, ишĕлтернĕ, çаратнă. Вĕсем çуртсене ишĕлтернĕ, хирти тырра çунтарнă е таптанă, садсене каснă, выльăх-чĕрлĕхе, апат-çимĕçе тата колхозсен ытти пурлăхне çаратнă, Германие илсе кайнă.

Совет Союзĕнчи совхозсене те питĕ пысăк сиен кӳнĕ. Нимĕçсем вĕсенчи апат-çимĕç запасĕсене илсе кайнă, хуçалăх çурчĕсене тата ытти çуртсене ишĕлтерсе хăварнă.

Çакăнпа пĕрлех захватчиксем ялхуçалăхĕн техника никĕсне те—машинно-тракторнăй станцисене пĕтере-пĕтере тăкнă. РСФСР-ăн оккупациленĕ облаçĕсенче вĕсем 1.000 МТС-а ытла пĕтерсе тăкнă, вĕсен 46.000 тракторне, 18.000 комбайнне, 23.000 сеялкине çĕмĕрнĕ е Германие илсе кайнă. Украинăра нимĕçсем 1.300 МТС-а пĕтерсе лартнă е çунтарса янă, вĕсенчен 56.000 трактор тата 24.000 комбайн илсе кайнă. Нимĕç захватчикĕсем Латви, Литва, Эстони республикисенче мĕнпур машинно-тракторнăй станцисене пĕтерсе тăкнă.

Мĕнпур колхозсемпе совхозсенче тата МТС-сенче оккупантсем 137.000 трактора, 49.000 комбайна, 4 миллиона яхăн плугпа сӳрене тата ытти хатĕрсене, акмалли тата лартмалли 265.000 машинăна, тырă вырмалли тата сортламалли 885.000 машинăна çĕмĕрсе тăкнă, тытса илнĕ тата Германие илсе кайнă.

Колхозсемпе совхозсене тата машинно-тракторнăй станцисене аркатса пырса, гитлеровецсем ялхуçалăхĕн наукăпа производство никĕсне те пĕтерсе пынă. Вĕсем ялхуçалăх тĕлĕшпе ĕçлекен 137 наукăпа тĕпчев институтне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă, чăх-чĕп кăларакан 176 инкубатор станцине тата 14 селекци станцине аркатса тăкнă.

ШКУЛСЕНЕ, МУЗЕЙСЕМПЕ ПАМЯТНИКСЕНЕ, СЫВЛĂХ УЧРЕЖДЕНИЙĔСЕНЕ, КУЛЬТУРĂПА ЙĂЛА ТАТА НАУКА УЧРЕЖДЕНИЙĔСЕНЕ ИШĔЛТЕРНИ

Фашистла нимĕç захватчикĕсем совет халăхĕн культура учрежденийĕсене калама çук пысăк сиен тунă. Вĕсем тĕрлĕ шкулсене, наука институчĕсене, библиотекăсене, больницăсене, санаторисене, кану çурчĕсене ишĕлтернĕ. 334 аслă шкула пĕтĕмпех е вĕсен пĕр пайне ишĕлтернĕ, çав шкулсенче 233.000 студент вĕреннĕ пулнă; лабораторисемпе кабинетсен оборудованине, питĕ сайра тĕл пулакан экспонатсене, университетсемпе институтсен коллекцийĕсене тата библиотекисене Германие турттарса кайнă.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем наука учрежденийĕсене юри ишĕлтернĕ, лабораторисемпе библиотекăсене юри çунтарнă, çаратнă, хаклă пурлăхпа оборудованине юри салатса пĕтернĕ. Вĕсем мĕн пурĕ 605 тĕпчев институтне пĕтерсе лартнă. Ленинград çывăхĕнче нимĕçсем Пулковри тĕп астрономи обсерваторине аркатса тăкнă (çав обсерваторире питĕ сайра тĕл пулакан инструментсем пулнă), Крымра вĕсем Симеизри астрономи обсерваторине ишĕлтернĕ, унăн оборудованине Германие илсе кайнă.

Нимĕçсем Совет Союзĕнчи сыватмалли учрежденисене калама çук пысăк сиен кӳнĕ. Вĕсем 6.000 больницăна, 33.000 поликлиникăпа диспансера тата амбулаторие, 976 санаторие, 656 кану çуртне ишĕлтернĕ тата çаратнă. Вĕсем тата эмельсемпе медицина инструменчĕсем тăвакан 60 фабрикăпа завода пĕтерсе тăкнă. Крымăн кăнтăр çыранĕнчи, Кавказри, Минеральные Воды хулинчи, Одессăри тата ытти вырăнсенчи санаторисемпе курортсене уйрăмах хытă сиенленĕ, ишĕлтерсе пĕтернĕ; çав санаторисемпе курортсенче вăрçăччен çуллен темиçе миллион ĕççынни каннă тата сывалнă.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем оккупациленĕ территорире Совет Союзĕнчи 992 музейрен 427 музее ишĕлтернĕ. Керчь портĕнче вĕсем совет художникĕсем ӳкернĕ «Штурм Перекопа» ятлă панорамăна пĕтерсе тăкнă. Рубо академик çырнă «Оборона Севастополя» ятлă калама çук чаплă панорамăпа та пысăк сиен тунă. Сталинградри картина галлерейинче вĕсем пур картинăсене те — Репин, Шишкин, Айвазовский, Серов, Маковский, Иванов тата ытти художниксем ӳкернĕ картинăсене пĕтерсе тăкнă. Пушкинри, Павловскри, Гатчинăри патша çурчĕ пулнă дворецсене, Октябрьти революци хыççăн музейсем туса хунăскерсене, пысăк сиен кӳнĕ. Çав дворец-музейсенчен Германие вырăссемпе французсен художествăллă авалхи сĕтел-пуканне, дворецсен библиотекисенчи хаклă кĕнекесене, скульптурăсене, илемлĕ фарфорсене тата ытти экспонатсене те илсе кайнă.

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Шыв вăййĕпе авăн çапаççĕ

КАЛИНИНО. (Хамăр корр.). Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхозра Çавал шывĕ çинче кăçал çĕнĕрен шыв арманĕ тунă. Шыв арманĕнче, çăнăх авăртнипе пĕр вăхăтрах, 4 лаша вăйлĕ авăн çапмалли молотилкăпа тата çăм тапакан машинăпа ĕçлемелле тунă.

Пĕр вăхăтрах çăнăх авăртмалли, авăн çапмалли тата çăм тапакан машина лартнă шыв арманне туса хатĕрлес ĕçре мастер Т. Малов тăрăшса ĕçленĕ. Çавăн пекех строительство бригадирĕ Н. Жирнов тата бригада членĕсем-плотниксем П. Коротков, Ф. Масянов, О. Михайлов, Л. Майоров юлташсем ырми-канми ĕçленĕ.

Армана туса пĕтерсе ĕçе янă. Халĕ çак арманта кулленех 350—400 пăт çăнăх авăртаççĕ тата 600 пăт таран тырă çапаççĕ.

Уславари «Броневик» колхоз та кăçалхипе иккĕмĕш çул ĕнтĕ шыв вăйĕпе авăн çапать. Кунта кашни кунах шыв вăйĕпе усă курса 400 пăт таран тырă çапаççĕ. Пухса кĕртнĕ тырпулран 40 процентне шыв вăйĕпех çапма ĕлкĕрнĕ.

Шыв вăйĕпе усă курни МТС-па колхозри турттăм вăйне перекетлет. Юхса выртакан шыв çывăхĕнчи кашни колхозах «Броневик» тата Пушкин ячĕпе тăракан колхозсем пек шыв вăйĕпе усă курма пултарать.

Совет Союзĕнчи государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсен, колхозсен, обществăллă организацисен тата граждансен пурлăхне фашистла нимĕç захватчикĕсем кӳнĕ сиен çинчен

Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра

Нимĕçсем совет халăхĕ уйрăмах хакла хуракан культура памятникĕсене çав тери кураймасăр пĕтерсе пынă. Вĕсем Михайловское ялĕнчи Пушкин заповедникĕпе имение вараласа пĕтернĕ, çавăнта ăслă поэт «Евгений Онегин», «Цыганы», «Борис Годунов» ятлă произведенисене çырнă; нимĕçсем А. С. Пушкинăн Святогорск монастырĕнчи çуртне-музее çунтарса янă тата унăн вилтăприне аркатса тăкнă, паркри авалхи йывăççене касса пĕтернĕ, поэтăн сĕтелпуканне, килти ытти япалисене тата библиотекине Германие илсе кайнă. Нимĕçсем вырăссен генилле писателĕ Л. Н. Толстой çуралса ӳснĕ тата хăйĕн чаплă произведенийĕсене çырнă «Ясная Поляна» заповедникне те çавăн пек тискеррĕн аркатнă. Клин хулинче фашистла нимĕç захватчикĕсем вырăссен генилле композиторĕн П. И. Чайковскин çуртне ишĕлтернĕ, çав çуртра композитор «Евгений Онегин», «Пиковая Дама» ятлă пĕтĕм тĕнчипе паллă оперăсене тата чапа тухнă ытти нумай музыка произведенийĕсене çырнă.

Кунсăр пуçне, фашистла нимĕç захватчикĕсем театрсен, клубсемпе хĕрлĕ кĕтессен 44.000 çуртне ишĕлтернĕ.

Кооперации тата профсоюз организацийĕсемпе обществăллă ытти организацисен 87.000 хуралтине ытла çĕмĕрсе тăкнă. Нимĕçсем Германие пăспа ĕçлекен 700 хуран, 636 локомобиль, 16.000 электромотор, металл касакан 12.000 станок, йывăç каскалакан 9.000 станок, 8.000 пир-авăр станокĕ, 7.000 автомашина, 70.000 çĕвĕ машини, 8 миллион кĕнеке яхăн Германие илсе кайнă, çавăн пекех тата выльăх, атă-пушмак, пир тата ытти япаласем нумай тытса илнĕ. Çапла потребкооперацин магазинĕсемпе лавкисен 40 процентне ытла ишĕлтернĕ. Профсоюзсен 120 санаторине тата 150 кану çуртне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă, çав санаторисемпе кану çурчĕсенче 3 миллион ытла рабочи, инженерсемпе техниксем тата служащисем каннă тата сывалнă. Нимĕçсем 46 пионер лагерĕпе сывалмалли учрежденисен çурчĕсене ишĕлтерсе пĕтернĕ тата 189 клубпа культура дворецне пĕтерсе тăкнă.

МОНАСТЫРЬСЕНЕ, ЧИРКӲСЕНЕ, КОСТЕЛСЕНЕ ИШĔЛТЕРНИ, ТАТА ÇАРАТНИ

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче фашистла нимĕç захватчикĕсем Совет Союзĕн оккупациленĕ территорийĕнче 1.670 чиркĕве, 237 костела, 69 часовньăна, 582 синагогăна тата тĕн учрежденийĕсен ытти 258 çуртне тытса илнĕ, ишĕлтернĕ, сиенленĕ. Киево-Печерски Лаврăри 1073 çулта тунă Успени чиркĕвне тата монастырĕн 8 корпусне пĕтĕмпех ишĕлтернĕ.

Монастырьсене, чиркӳсене, мичетсене тата синагогăсене ишĕлтерсе, вĕсен пурлăхне çаратса, нимĕç захватчикĕсем çынсен тĕн туйăмĕнчен кулнă. Салтаксемпе офицерсем чиркӳсене çĕлĕксемпе кĕнĕ, унта табак туртнă, чиркӳ тумтирне тăхăннă, чиркӳсенче лашасемпе йытăсене усранă.

НИМĔÇСЕМ СОВЕТ ÇЫННИСЕНЕ ЙЫШЛĂН ÇАРАТНИ

Совет Союзĕн оккупациленĕ мĕнпур республикисенче тата крайĕсемпе облаçĕсенче фашистла нимĕç захватчикĕсем ялтипе хулари халăха çаратнă, - унăн пурлăхне, хаклă япалисене, тумтирне, килте кирлĕ ытти япалисене тыта-тыта илнĕ, мирлĕ çынсене штрафсем, налогсем, контрибуцисем тӳлеттернĕ. Халăха пур çĕрте те çаратни—Гитлер правительствин малтанах шухăшласа хунă программин, Совет çĕршывне юхăнтарса ярас, унăн пурнăçне хавшатас, совет çыннисене ыйткалакансем туса ярас программин пĕр пайĕ пулнă.

Смоленск облаçĕнче оккупантсем хуласемпе ялсенчи çынсенчен вĕсен хăйсен 136.000 ĕнипе вăкăрне, 107.000 сыснине, 240.000 сурăхĕпе качакине, 180.000 тонна тыррине, 400.000 тоннăна яхăн çĕрулмипе пахчаçимĕçне туртса илнĕ. Фашистла захватчиксем 2.265 ялта пурăнмалли 129.000 киле тата картишĕнчи 278.000 хуралта, граждансен хăйсен çуртйĕрĕсем пулса тăракан-скерсене, çунтарса янă.

Орел облаçĕнче гитлеровецсем граждансен 173.000 çуртне тата картишĕнчи 197.000 хуралтине çунтарса янă, ишĕлтернĕ. Вĕсем халăхран 15.000 лаша, 200.000 ĕнепе вăкăр, 112.000 сысна, 312.000 сурăхпа качака, 3 миллион пуçа яхăн килти чăх-чĕп, 96.000 тонна тырă, 14.000 тонна çăнăх, 133.000 тонна çĕрулми туртса илнĕ.

Чернигов облаçĕнчи рабочисемпе колхозниксене тата служащисене йĕркипе çаратса пырса, нимĕçсен карательнăй отрячĕ 1943 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче Загребальная Слобода ятлă яла çавăрса илнĕ те пулеметсемпе пеме пуçланă. Ял çыннисем. хăйсен пĕтĕм пурлăхне пăрахса хăварса вăрмана тарнă. Çавăн хыççăн нимĕçсем вĕсен пурлăхне пĕтĕмпех çаратса тухнă, ялне çунтарса янă. Çавăн пек майпа нимĕçсем ытти темиçе ялпа рабочи поселокне те пĕтерсе тăкнă.

Латви, Литва тата Эстони республикисенчи хресченсенчен фашистла нимĕç захватчикĕсем Совет влаçĕ панă çĕре туртса илнĕ. Çав çĕре нимĕçсем хăйсен баронĕсемпе кулакĕсене панă. Литва гражданĕсенчен çеç вĕсем 620.000 ĕнепе вăкăр, 220.000 лаша, 770.000 сысна, 270.000 сурăхпа качака, 760.000 тонна тырă, 485.000 тонна ытти ялхуçалăх продукчĕсем туртса илнĕ.

Киев хулинче 1942 çулхи октябрĕн 6-мĕшĕнче обер-штурмбанфюрер Шпацель мĕнпур çынсене хăйсен мĕнпур ылттăнне, кĕмĕлне, хаклă япалисене пурне те пырса пама хушнă. Халăх хăй ирĕкĕпе çапла тăвассине шанмасăр, гитлеровецсем хулана «боевой зонăсем» туса уйăрнă, çав зонăсенчен çынсене пурне те кăларса янă. Пушă юлнă çуртсенче вара пуринче те япаласене çаратса тухнă.

Кисловодск хулинче 1942 çулхи августра çар коменданчĕ Поль тата гестапо начальникĕ Вельден еврей халăхне хăйĕн мĕнпур хаклă япалисене илсе пырса пама хушнă. Çапла хушнипе нимĕç комендатурине 100.000 тенкĕ укçа, 530 штук ылттăн тата кĕмĕл çĕрĕсем, портсигарсем тата сехетсем, 105 дюжина кĕмĕл кашăксем, 230 мăшăр атă-пушмак илсе пынă, кунсăр пуçне пальтосем, костюмсем, коверсем нумай илсе пырса панă. Çак япаласене пурне те нимĕçсем çавăрса илнĕ, ун хыççăн еврейсене пурне те персе вĕлернĕ.

Нимĕç захватчикĕсем совет халăхпе Совет Союзĕн оккупациленĕ пĕтĕм территорийĕнче çаратнă.

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси совет гражданĕсене оккупаци влаçĕсем кӳнĕ сиене шута илсе çакна палăртнă: фашистла нимĕç захватчикĕсем колхозниксемпе рабочисен тата служащисен хăйсен 4 миллион çуртне ытла çунтарса янă тата ишĕлтернĕ, вĕсенчен 1,5 миллион лаша, 9 миллион ĕнепе вăкăр, 12 миллион сысна, 13 миллион сурăхпа качака туртса илнĕ, çавăн пекех тата килти пурлăха питĕ нумай туртса илнĕ.

* * *

Совет Союзĕн территорийĕнче хуласемпе ялсене, фабрикăсемпе заводсене, колхозсемпе совхозсене ишĕлтернĕшĕн тата граждансен хăйсен пурлăхне çаратнăшăн айăплă нимĕç оккупанчĕсене хăйсен преступникла ĕçĕсемшĕн тулли ответ тыттармалла, фашистла нимĕç захватчикĕсем Совет Союзĕн халăх хуçалăхĕпе совет çыннисене кӳнĕ сиене Германирен шыраса илмелле.

Румыни Премьер-Министрĕ П. Гроза господин тата Румыни Вице-Премьерĕ Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ П. Татареску господин Мускавран кайни

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче Румыни Премьер-Министрĕ П. Гроза господин, Вице-Премьер Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Г. Татареску господин, Çулйĕрсен тата Обществăллă ĕçсен Министрĕ Георгиу Деж господин, Çутĕç Министрĕ Ш. Войтек господин тата М. Гельмеджану, М. Солаколу, Б. Шкиопу господинсем Мускавран тухса кайнă.

Вĕсемпе пĕр вăхăтрах Совет Союзĕн Румынири Посолĕ С. И. Кавтарадзе тата Союзниксен Румынири Контроль Комиссийĕн Председателĕн Заместителĕ И. З. Сусайков генерал-полковник тухса кайнă.

Каякансене центральнăй аэродромра çаксем ăсатса янă: СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ—РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ А. Н. Косыгин, Çулйĕр Халăх Комиссарĕ И. В. Ковалев, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, Тулашри суту-илӳ Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Д. Крутиков, Çулйĕр Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Б. Н. Арутюнов, Мускав Совечĕн Председателĕн Заместителĕ М. А. Яснов, Мускав хули коменданчĕ К. Р. Синилов генерал-лейтенант, СССР Наркоминделăн ответлă сотрудникĕсем А. П. Павлов, Ф. Ф. Молочков тата А. П. Власов.

Каякансене тата Румыни Посолĕ И. Иордан тата Посольство сотрудникĕсем ăсатса янă.

Ăсатса янă чухне хисеплĕ хурал тăратнă, Румынин тата Совет Союзĕн государство гимнĕсене каланă.

Аэродрома Румынин тата Совет Союзĕн флагĕсене çакса илемлетнĕ.

Петре Гроза господин калани

Мускавран тухса кайнă чухне Румыни Премьер-Министрĕ Петре Гроза господин микрофон умĕнче çапла каланă:

«Вунă кун хушши эпир Совет Союзĕн çав тери илемлĕ столицинче хăна пулса пурăнтăмăр. Пире юратса хăна тунăшăн эпир хытă тав тăватпăр, çак аслă хулана эпир яланах ырăн асăнса пурăнăпăр.

Мускав çĕрĕ çинчен вĕçсе хăпариччен эпĕ самолет çинчен хам ятпа тата хамăн юлташсен ячĕпе Мускава хĕрӳллĕ салам калатăп. Çапла тав тунипе пĕрлех эпир кунтан савăнса тухса каятпăр, мĕншĕн тесен эпир кунта Совет правительствипе пĕрле вунă кун хушши ĕçлесе пурăнни питĕ усăллă пулчĕ. Пирĕн ĕç çак икĕ çĕршыва та ырлăх кӳрĕ.

Эпир пĕр-пĕрне çапла лайăх ăнланни тата пĕр-пĕрипе лайăх килĕшсе ĕçлени çак кӳршĕллĕ икĕ çĕршывăн эпир пуçласа янă ĕмĕрхи туслăхĕн никĕсне хунă тепĕр чул вырăнне пулса тăрĕ.

Хамран тата хамăн юлташсенчен — правительство членĕсенчен—çак аслă çĕршыва чаплăн вăйланса пыма ырă сунатăп.

Совет Правительствин членĕсене сывлăх сунатăп.

Çак аслă халăха ертсе пыракансене пурне те, пуринчен малтан Сталин Генералиссимуса, сывлăх сунатăп. Пирĕн мĕнпур шухăшăмăр Сталин Генералиссимуса пĕтĕм чĕререн тав туса хисеплесси, вăл Румыни халăхне Совет Союзĕ аслă пулăшу парассине татса пачĕ, çавăнпа та ăна Румыни халăхĕ ман урлă пысăк салам ярать, нумайччен сывă пулса пурăнма ырă сунать».

СОВЕТ СОЮЗНЕ ФИНЛЯНДИН ЧРЕЗВЫЧАЙНĂЙ ПОСЛАННИКĔ ТАТА ПОЛНОМОЧНĂЙ МИНИСТРĔ КАЯ СУНДСТРЕМ ГОСПОДИН КИЛНĔ

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче Мускава Финляндин Чрезвычайнăй Посланникĕ тата Полномочнăй Министрĕ К. Сундстрем господин килнĕ.

Центральнăй аэродромра К. Сундстрем господина СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн Заведующийĕ Ф. Ф. Молочков хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

Иранра çĕнĕрен организациленĕ демократиллĕ парти чĕнсе калани

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Тавризра Иранра çĕнĕрен организациленĕ «Азербайджан» ятлă демократиллĕ организаци чĕнсе каланине листовка туса пичетлесе кăларнă.

Чĕнсе каланин малтанхи пайĕнче çапла каланă: Иранра «демократин палли те юлмарĕ», çакăн пек режим тăрсан, Иран халăхĕ нихăçан та прогресс çулĕ çине тухма пултараймас çук.

Иран Азербайджанĕнче, тенĕ çав чĕнсе каланинче, азербайджанецсем 4,5 миллион çынна яхăн пурăнаççĕ. Вĕсем Иранри ытти халăхран хăйсен чĕлхипе тата йăлисемпе уйрăм тăраççĕ. «Центрта ирсĕр политика тытса пынине пула, — тенĕ чĕнсе каланинче,—Азербайджанăн нимĕнле права та çук. Унăн ывăлĕсем хăйсен килĕсенче те килти пек ирĕклĕн пурăнма пултараймаççĕ. Вĕсен хăйсен чĕлхипе вĕренмелли права çук. Азербайджан интеллигенцийĕ хăйсен тăван çĕршывне чечеклентерес тесе ĕçлеме пултараймасть. Çакăн пек йывăрлăха текех чăтма çук, ăна малашне тӳссе пурăнма май килмест. Эпир пĕтĕмĕшле тата тĕрĕс законсене пăхăнса пыма хатĕр, анчах эпир хамăрăн килĕмĕрсенче хамăр хуçа пуласшăн, хамăрăн çĕршыва хамăра килĕшнĕ пек тытса пырасшăн».

Демократиллĕ парти хăйĕн программине йышăнакансене пурне те хăйĕн ретне кĕме чĕнет. Партие класа, профессие, мĕнле ĕçре ĕçленине пăхмасăр пурне те илеççĕ. Парти программине тепĕр чухне пичетлесе кăларма хатĕрленеççĕ.

Чĕнсе каланинче çакăн пек лозунг кăларса тăратнă: Ирана территори енчен тĕрĕс-тĕкĕл сыхласа хăварас пулсан, Азербайджан халăхне вара ирĕклĕх тата хăйĕн крайĕнчи культурăпа хуçалăха çĕршывăн нациллĕ тата обществăллă законĕсемпе килĕштерсе аталанса пыма ирĕк памалла. Çак тĕллеве пурнăçа кĕртес тесе, халех облаçсемпе районсенчи энджуменсем организацилемелле. Вĕсен вара хăйсен ĕçне экономика, çутĕç тата сывлăх ĕçĕ тĕлĕшпе кăна мар туса пымалла, вĕсен мĕнпур государство служащисен ĕçне те тĕрĕслесе тăмалла.

Демократиллĕ парти хăй умне промышленноçа, тулашри тата шалти суту-илĕве аталантарас, хуласене юсаса илемлетес ĕçе организацилес, ĕçсĕрлĕхе пĕтерес, хресченсен нушисене тивĕçтерсе пырас задачăна лартать. Государство çĕрĕсене, çавăн пекех тата Тегеранра е ытти хуласенче пурăнакан çынсен çĕрĕсене те, вĕсем Азербайджана таврăнмаççĕ пулсан, «демократиллĕ парти шухăшĕпе, туртса илмелле те хресченсене валеçсе памалла».

Демократиллĕ парти çапла палăртать: Иранри Азербайджан тĕлĕшĕпе суйлав законĕнче питĕ пысăк тĕрĕсмарлăх пур. Парти шутланă тăрăх, Иран Азербайджанĕнчи халăх хисепне шута илсе, меджлисри мĕнпур депутатсен хисепĕнчен виççĕ пайĕнчен пĕр пайĕ Азербайджанран суйласа янă депутатсем пулмалла. Халĕ унта пĕтĕмпе те 20 депутат кăна (ултă пайран пĕр пайĕ чухлĕ).

Чĕнсе калани халăх пурлăхне çаратакансене хирĕç, государство учрежденийĕсене кĕрсе ларнă шанчăксăр çынсене хирĕç кĕрешме чĕнет, тӳрĕ чĕреллĕ пур работниксене те пулăшса пыма сăмах парать. Чĕнсе каланинче Азербайджанра пухакан мĕнпур налогсенчен çуррине Азербайджанра хăйĕнчех тăкаклама ыйтать. Тӳлесе татма çук нумай тĕрлĕ налогсене чакармалла.

Демократиллĕ парти çапла каласа парать: Иранра созниксемпе туслăн пурăнмалла, çак туслăха пăсма тăрăшакансене ответ тыттармалла.

Чĕнсе каланинче Иран Азербайджанĕн патриочĕсем демократиллĕ партие «хăй умне лартнă таса тĕллевсене пурнăçа кĕртес ĕçре пулăшассине» шанса калать. Çакă ĕнтĕ Азербайджана тата мĕнпур Ирана прогресс патне илсе пырĕ, тăван çĕршыва сутăнчăксемпе реакционерсенчен çăлса хăварĕ.

Чĕнсе каланине Тавриз, Резайе, Хоя хулисенчи 76 представитель алă пуснă. Алă пуснисем хушшинче наука, культура, искусство представителĕсем, адвокатсем, учительсем, рабочисем, алăстаçсем, магазин, фабрикăсемпе мастерскойсен хуçисем пур.

ЯПОНЕЦСЕМ ПИРЛ-ХАРБОРА ТАПĂННИНЕ ТĔПЧЕСЕ ПĔЛМЕ США КОНГРЕСĔН ПĔРЛЕШӲЛЛĔ КОМИТЕТНЕ ТУНИ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). США-ри представительсен палати японецсем Пирл-Харбора тапăннине тĕпчесе пĕлме икĕ палатăн пĕрлешӳллĕ комитетне тăвасси çинчен сенатра йышăннă резолюцие пĕр саслă пулса ырланă. Çак резолюцие сенатра сентябрĕн 6-мĕшĕнче пĕр сасăпа ырланă пулнă.

Республиканецсен лидерĕ Мартин резолюцие тӳрлетӳ кĕртме сĕннĕ. Мартин панă сĕнӳ тăрăх, пĕрлешӳллĕ комитетра республиканецсемпе демократсен представителĕсем пĕртан пулмалла. Вара представительсен палати çав сĕнĕве йышăнман. Сĕнӳ майлă 136 сасă, сĕнĕве хирĕç 168 сасă пулнă. Резолюцире кăтартнă тăрăх, комитет составĕнче 6 демократ тата 4 республиканец пулмалла.

ПААСИКИВИ ВĂРÇА ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ АЙĂПЛАССИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНА АЛĂ ПУСНĂ

ХЕЛЬСИНКИ, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Финлянди премьер-министрĕ Паасикиви, Маннергейм сывмар пулнă пирки президент ĕçĕсене туса тăракан-скер, вăрçă преступникĕсене айăпласси çинчен Финлянди сеймĕ йышăннă закона алă пуснă.

ЯПОНИ ФЕЛЬДМАРШАЛĔ СУГИЯМА ХĂЙНЕ ХĂЙ ВИЛНИ

ТОКИО, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Японецсен Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 12-мĕшĕнче Япони çарĕн главнокомандующийĕ Сугияма хăйне хăй вилнĕ.

Вăл Токио хулинче Японин шалти оборона çарĕн штабĕнче хăйне хăй персе вилнĕ. Вăрçă вăхăтĕнче Сугияма фельдмаршал çар министрĕ тата Япони çарĕн генеральнăй штабĕн начальникĕ пулнă.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕН ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂНХИ ФЛОЧĔ МĔНЛЕ ПУЛМАЛЛИ ÇИНЧЕН ПАНĂ СĔНӲ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). США-ри тинĕс ĕçĕсен сенат комиссийĕн председателĕ сенатор-демократ Уолш (Массачузетс штатĕнчен) тата представительсен палатин тинĕс ĕçĕсен комиссин председателĕ конгресс членĕ — демократ Винсон (Джорджи штатĕнчен) закон проекчĕ сĕннĕ. Çав проект тăрăх, Америкăн вăрçă хыççăнхи флотĕнче 1.079 карап, вăл шутра 18 линкор тата 196 авианосец пулмалла. Флотăн личнăй составĕнче 500.000 матрос тата 40.000 офицер пулмалла.

Проектра çапла палăртнă: флотăн виççĕ пайĕнчен пĕр пайĕн команди яланах хатĕр тăмалла, тепĕр пайĕн вара пĕр пайĕ çеç карапсем çинче пулмалла, боевой служба вăхăтĕнче кăна ăна пухса тултармалла. Юлашки пайĕн командипе пĕтĕмпех салатса ямалла, анчах кирлĕ вăхăтра мобилизаци тума хатĕр тытмалла.

АНГЛИПЕ АМЕРИКА ЭКОНОМИКА ТĔЛĔШĔПЕ КАЛАÇНИ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). (Вăхăтра çитереймен). США-н Государство департаменчĕ çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: сентябрĕн 11-мĕшĕнче Государство департаментĕнче Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Пĕрлештернĕ Королевствăн представителĕсем хушшинче вăрçă хыççăн финанс тата суту-илӳ сыхăнăвĕсем мĕнле пуласси çинчен официальнăй калаçусем пуçланнă. «Çав калаçусенче питĕ нумай ыйтусене татса памалла. Вăл ыйтусем икĕ çĕршывăн интересĕсене те пырса тиveççĕ. Çав ыйтусем пирки эпир икĕ çул хушши ĕнтĕ тĕрлĕрен тĕпчев ĕçĕсем туса ирттертĕмĕр. Калаçусен кун йĕркине çакăн пек тăвата тĕп ыйту кĕрет: 1) Финанс ыйтăвĕсем; 2) Ленд-лиза пĕтересси тата обстоятельствăсене йĕркелесси; 3) Суту-илӳ политики; 4) Ют çĕршывсенчи ытлашши харпăрлăха пĕтересси».

Калаçусенчи Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен делегацийĕн составне государство секретарĕ Бирнс кĕрет. Вăл калаçусен председателĕ пулать. Бирнс Лондонра пулнă вăхăтра, государство секретарĕн экономика ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен помощникĕ Клейтон председатель ĕçĕсене туса пырать.

Пĕрлештернĕ Королевствăн делегацийе Англин США-ри посолĕ Галифакс ертсе пырать.

ГЕРМАНИ ГЕСТАПИ ТĔРЛĔ ÇĔРШЫВСЕН ПОЛИЦИЙĔПЕ ÇЫХĂНСА ТĂНИНЕ КĂТАРТАКАН СЕКРЕТЛĂ ДОКУМЕНТСЕМ ТУПĂННĂ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Берлинран çапла пĕлтернĕ: Германин секретлă документĕсене тупнă, çав документсенчен вăрçăччен фашистсене хирĕç пынă çынсене хĕсĕрлес тĕлĕшпе гестапо 13 çĕршывăн полицийĕпе килĕшсе татални курăнать. Ют çĕршывсен обозревателĕсем Гиммлер 1940 çулхи октябрь уйăхĕнче Испание пырса кайни çинчен асăрхаттарнă, çав вăхăтра гестапо Франко полицийĕпе таччăнрах çыхăнса ĕçлеме пуçланă. Ун чухне влаçа хăйсен аллине тытса тăнă çынсенчен ытларахăшĕ халь те хăйсен вырăнĕнчех ĕçлеççĕ, ĕлĕк ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулса ĕçленĕ Суньер тата полици начальникĕ пулса ĕçленĕ Майальде çеç хăйсен ĕлĕкхи вырăнĕнче ĕçлемеççĕ.

Берлинран пĕлтернинче çапла каланă: 1938 çулта Гейдрих Геринга çыру янă, çав çырура вăл гестапо Бельги, Болгари, Финлянди, Итали, Югослави, Португали, Испани тата Венгри полицийĕсемпе хут çине çырнă килĕшӳсем туни çинчен тата Бразилипе, Греципе, Голландипе, Японипе, Польшăпа сăмах вĕççĕн калаçса татални çинчен пĕлтернĕ.

Ответлă редактор
В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти 11-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕ вĕренме илет.

ФЗО шкулĕ электричество промышленноçĕ валли çак специальноçсемпе ĕçлекен квалификациллĕ рабочисене вĕрентсе хатĕрлет: токарьсене, слесарь-монтажниксене, слесарь-сборщиксене, станоксем юсакан тата лартакан слесарьсене, плотниксене.

ФЗО шкулне 15 çултан пуçласа 18 çула çитнĕ çынсене пурне те испытанисĕрех илеççĕ.

Вĕренме илнĕ çынсене кунне виçĕ хут укçасăрах апатлантараççĕ, çуллахи тата хĕллехи тумтирсем параççĕ, кĕпе-йĕм тата выртса тăмалли хатĕрсем параççĕ, культурăпа йăла тĕлĕшĕнчен пулăшаççĕ.

Ĕç укçине кашни вĕренекене ĕçне кура параççĕ.

Заявленисене октябрĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Заявленире мĕнле специальноçа вĕренме шут тытнине кăтартмалла. Заявленипе пĕрле çакăн пек документсем ямалла: 1) хăçан ăçта çуралнине кăтартакан свидетельство, 2) ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, 3) сывлăх çинчен калакан справка. Ĕçлесе тăнă вырăнта апат-çимĕç илсе тăма пăрахнине кăтартакан справкăна кашни хăй пырсан кăтартать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Заводская, 34.

2—1.

5 сентябрь — Тĕштырăсене вырса пĕтермелли вунăкунлăх — 15 сентябрь

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем СЕНТЯБРĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (Процентпа)

МТС-сем	Султалăкри плана тултарнă	Авăн çапнă	Кĕрхи çĕртме тунă
Вăрнар	143,2	65,2	7,3
Шăхасан	119,9	3,8	23,7
Куславкка	118,1	16,4	10,9
Йĕпреç	115,3	20,1	—
Комсомольски	110,4	34,2	5,8
Елчĕк	109,0	16,6	20,1
Канаш	107,7	—	—
Вăрмар	107,2	47,6	6,9
Чкаловски	104,3	40,4	17,6
Красноармейски	104,2	8,5	15,1
Ишлей	102,0	—	—
Хĕрлĕ Чутай	102,0	6,4	—
Çĕрпӳ	100,1	6,2	—
Калинино	96,9	25,0	17,0
Первомайски	89,6	9,7	—
Элĕк	86,6	26,3	2,9
Улатăр	86,3	22,1	4,4
Тăвай	85,0	5,3	0,3
Сĕнтĕр	82,3	2,8	10,7
Çĕмĕрле	80,4	8,1	1,9
Сĕнтĕрвăрри	77,2	6,7	4,1
Шупашкар	80,1	11,7	8,3
Етĕрне	74,9	22,9	3,3
Октябрьски	73,7	7,4	15,4
Сиява	64,2	6,9	—
Кувакино	62,2	13,4	—
Сурмайдан	61,8	6,2	—
Шăмăршă	60,3	2,8	0,4
Пăрачкав	57,2	26,3	—

Советски район тĕштырăсене вырса пĕтернĕ

СОВЕТСКОЕ, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсем сентябрĕн 13-мĕшĕ тĕлне 16.150 гектар тĕштырра вырса пĕтернĕ. Халĕ колхозниксемпе колхозницăсем тырра капана хывас, авăн çапас тата государствăна тырă парас тĕлĕшпе кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. Кĕрхи çĕртме сухине тăвас ĕç те ăнăçлăн пырать.

Государствăна тырă парса татнă

Комсомольски районри чылай колхозсем государство умĕнчи хăйсен чи пысăк тивĕçне—государствăна тырă парассине ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ. Районра чăн малтан Нĕркеçри Шмидт ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Коновалов юлташ) государствăна чи лайăх тырра 1064 центнер леçсе хăйĕн планне 100 процент тултарнă. Çавăн пекех Кипеçри «Трактор» колхоз (председателĕ Т. Иванова юлташ), «Красный Октябрь» колхоз (председателĕ Акчурин юлташ), «Хунав» колхоз (председателĕ Л. Петров юлташ) государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех тултарнă. Çак колхозсем вунăкунлăха хутшăнса тĕштырăсене вырса, капана хывса тата ыраш акса пĕтернĕ. «Мурат» колхоз (председателĕ Степанов юлташ) государствăна 723 центнер тырă парса хăйĕн планне 100 проценчĕпех тултарнă, тĕштырăсене вырса пĕтернĕ тата капана хывнă. Ыраш акмалли плана ытлашшипех пурнăçланă.

* * *

Калинино районĕнчи «Красный кавалерист» колхоз (председателĕ Федоров юлташ), «Красноармеец» колхоз (председателĕ Николаев юлташ) государствăна тырă памалли плана 100 проценчĕпех пурнăçланă. Çак колхоз та тĕштырăсене вырса, вĕсене капана хывса пĕтернĕ. Ыраш акмалли плана тултарнă. Халĕ кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ тата пикенсех кĕрхи çĕртме тăваççĕ.

* * *

Шăмăршă районĕнчи «Победа» колхоз (председателĕ Г. И. Концов юлташ, «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе наградăланăскер) районра чăн малтан тĕштырăсене вырса тата капана хывса пĕтернĕ. Ыраш акмалли плана 25-мĕшĕ тĕлне пурнăçланă. Юнашарти «Кзыл юл» колхоза пулăшса 40 гектар акса панă. Государствăна тырă памалли плана 100 проценчĕпех тултарнă. «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе наградăланă Ольга Бабаева юлташ ертсе пыракан бригада колхозра мала тухнă, вăл ытти бригадăсене тырпул пухса кĕртме нумай пулăшнă.

Колхозра халĕ пикенсех çĕртме сухи тăваççĕ, паянхи кун тĕлне 30 гектар ытла сухаланă.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Васильев юлташ, «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе наградăланăскер»), «Заря» колхоз (председателĕ Егоров юлташ), «Малалла» колхоз (председателĕ Краснова юлташ) государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех тултарнă. Çак колхозсем капан хывмалли, çапмалли тата кĕрхи çĕртме тумалли графика ирттерсе пурнăçласа пыраççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхоз 25 гектар кĕрхи çĕртме тунă.

* * *

Шăхасан районĕнчи «Активист» колхоз (председателĕ М. Тимофеев юлташ), «Новая жизнь» колхоз (председателĕ Зверев юлташ), «Красный партизан» колхоз (председателĕ Васильев юлташ) тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех тултарнă.

Колхоз çуртыррисене вырса пĕтерчĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. ВКП(б) Чăваш Обкомĕ ячĕпе тăракан колхоз çуртыррисене сентябрĕн 12-мĕшĕнче вырса пĕтерчĕ. Халĕ колхозра çĕртме тăвас, кĕлте турттарас тата авăн çапас ĕçсем пыраççĕ. Государствăна тырпул памалли графика колхоз ăнăçлăн тултарса пырать. Авăн çапас ĕçре 2 молотилка кунĕн-çĕрĕн ĕçлет. Колхозниксем сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пĕтĕм тырра çапса пĕтерме васкаççĕ. Уйрăмăнах авăн çапас ĕçре Мария Ефимова тата Ульяна Васильева колхозницăсем пултаруллăн ĕçлеççĕ, вĕсем хăйсен нормине кулленех 200—250 процента çити тултарса пыраççĕ.

Колхоза тырă вырнă çĕрте Хĕрлĕ Çартан отпуска таврăннă офицерсем те пысăк пулăшу пачĕç. Старши лейтенант Г. Ефимовпа лейтенант В. Петров юлташсем хире тул çутăличченех тухса, кĕрепеллĕ çавапа пĕр эрне ытла тырă вырчĕç. Тырă вырнипе пĕрлех, вĕсем колхозниксем хушшинче калаçусем ирттерчĕç. Хăйсене ĕçре пулăшнăшăн колхозниксем паттăр воинсене тав тăваççĕ.

Д. ГОРДЕЕВ,
Колхозри парторганизаци секретарĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00636 Типография № 1 Управлении полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59 42 п. л. Тираж 16.000 экз.